К84.89(=Чув)
М33
Ч-48419



Галина Матвеева

# Курак тăманĕ

Национальная библиотека ЧР
4-048419

Обязат. экз.
К84.89(=Чув)
М33

Галина Матвеева

# Курак тăманĕ

Сăвăсем. Сăвăлла юмах

Художникĕ *И.В. Алексеев*



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2016

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2Рос=Чув)6-5
М 33

*Кĕнеке ал çырăвĕ ачасемпе çамрăксем валли чăвашла çырнă произведенисен 2015 çулхи конкурсĕнче çĕнтернĕ. Конкурса Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2011 çулхи июнĕн 16-мĕшĕнче йышăннă постановленипе килĕшӳллĕн йĕркеленĕ*

**Матвеева Г.А.**
М 33 Курак тăманĕ. Сăвăсем. Сăвăлла юмах. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2016. — 40 с.
ISBN 978-5-7670-2452-0

«Курак тăманĕ» кĕнеке икĕ пайран тăрать. Малтанхи пайне хальхи ачасем çинчен çырнă сăвăсем кĕнĕ. Ларма-тăма пĕлменскерсем кун каçипе таçта та çитеççĕ, тем те тăваççĕ, çут çанталăк вăрттăнлăхĕсене ăнланма тăрăшаççĕ.

Иккĕмĕш пайне «Тилĕпе Улатакка» сăвăлла юмах йышăнать. Сунарçă алтнă шăтăкран чееленсе тухма пултарнă тилĕ çинчен хывнă юмахсем халăхра темиçе те упранса юлнă. Автор вĕсенчен чи интереслине суйласа илсе сăвăласа каласа панă, содержание хушма сăнарсем, диалогсем кĕртсе пуянлатнă. Çăмăл чĕлхепе, янăравлă рифмăсемпе çырнă юмах такама та килĕшмелле.

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2Рос=Чув)6-5

Проверено 2 СЕН 2017

Ч-48419

ISBN 978-5-7670-2452-0

© Матвеева Г.А., 2016
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2016

Национальная библиотека Чувашской Республики



# Ирхине.

Ир тăрсассăн манăнне
Ыйхăма татмасть анне,
Хулăнрах мана витет:
«Çывăр, ывлăм, çывăр», — тет.

Вăл кайсассăн пурпĕрех
Вăранатăп эп ирех.
Çывăрса ăçтан выртан —
Хуралласçĕ иккĕн тан.

«Тин-тин-тин! — тет. — Тин-тин-тин!
Тĕлĕрсе ан вырт халь тин!»
Ку — мобильник ман. Унпа
Çăмăл пĕр чĕлхе тупма.





Тӳмине пусан кӑна —
Шӑпланать вӑл пӗр кана.
Ма тӑмастӑп тетӗр-и?
Ыйхӑ тутлӑ ҫав тери.

«Сантӑр-р! Сантӑр-р! Тӑр-тӑр-тӑр-р-р!»
Трактор тейӗн: тӑр-р! та тӑр-р-р!
Ку — будильник. Ах, ҫавна!
Ҫывӑрма памасть ҫынна.

Темшӗн, темшӗн тӗпелте
Хӑварать ӑна атте?
Ал тӑсса чарма май ҫук,
Пӗр тӑрсассӑн — ыйхӑм ҫук.



# Кусене паян лекет.

Ҫӑм нуски — сӗтел ҫинче,
Ҫи витти — урайӗнче.
Кашӑк вӑркӑннӑ инҫе,
Халь вӑл кресло айӗнче.

Ах, ҫав чӑрсӑр мечӗке!
Хуҫса хучӗ чечеке.
Ӳкрӗ те чӳлмек чӑл-пар!
Ванса кайрӗ — мӗн тӑвар?

Ураланнӑ кӗнеке
Тухса выртнӑ ҫенӗке.



Ӳппĕн-теппĕн пукансем...
Пуçтахланнă такамсем.

Çӳлĕк юлнă пуш-пушах,
Тăрринче ларать кушак.
Йĕтĕр евĕр ун хӳри,
Куçĕ шиклĕ çав тери.

Икĕ ывăл — ик ача
Вăй вылянă кун каçа:
Мечĕкле, пытанукла,
Вăрçăлла та салтакла...

Кам çĕнтернĕ — çав маттур,
Мухтанма сăлтавĕ пур.
Кушак тус вара пĕлет:
Кусене паян лекет.



# Сĕт ачисем.

Чăр-чăр! чăр-чăр! чăр-чăр!
Анне сăвать ĕне.
Пăхса ларать чăр-чăр
Кушак вăл сунине.

Тулса ҫитсен витре
Ĕҫме ҫăра сĕте
Курка тытса пӳртрен
Тухатăп эпĕ те.

Ҫула-ҫула илет
Кампур та чĕлхине.
Ăш сĕт ĕҫес килет
Пурин те каҫхине.

Анчах йытта ямасть
Ĕне хăй ҫывăхне.
Кампурĕ сас памасть —
Туять пуль «ҫылăхне».

Хаяр вăл кĕтӳре,
Пĕлет хăй тивĕҫне.
Вĕрет те хӳтерет,
Кĕртмест калча ҫине.



# Ма кулаççĕ?

Ачасем халь урăхрах,
Хăвăрах пĕлетĕр.
Парта айĕн урокрах
Тем çиет Хĕветĕр.

Ӳркенет вăл вулама —
Ыттисем вулаччăр.
Пур ун вăрттăн чăмлама
Кăпăшка кулачă.

Тăрăхлать вĕрентекен:
— Курăр-ха, Хĕветĕр
Парта айĕнчех иккен
Пĕçерет кĕлентĕр.

Тин пуçне çĕклет ача:
Ма унран кулаççĕ?
Тем каласшăн хăй, анчах
Çăварта — кулачă.



# Хӑратмӑш.

Манӑн шӑллӑм тем сӑрланӑ,
Аллине йӑлт варалanӑ.
Вӑл ӳкернӗ Темӗскер
Калама та ҫук тискер:

Кӑмрӑк евӗр куҫлӑскер,
Ҫӗтӗк-ҫатӑк тумлӑскер,
Лӑпӑс-лапӑс ҫӳҫлӗскер,
Катемпи манерлӗскер.

— Ку Хӑратмӑш тенӗскер,
Хӑрӑмпа ӳкернӗскер,
Хӑратмашкӑн кирлӗскер, —
Тет ман шӑллӑм, пӗчӗкскер.

Тин кунтаччӗ йӑрӑскер,
Пач ҫухалчӗ ҫакӑскер.
Хӑй Хӑратмӑшран хӑранӑ,
Кӑмака хыҫне пытаннӑ.



# Кăвакалăн мисе чĕпĕ?

Шутлама Петюк вĕреннĕ,
Аллине сарса çĕкленĕ.
Астумашкăн миçине
Хуçлатать вăл пӳрнине:

«Пĕрре, иккĕ, виççĕ... виççĕ...»
Вырăнта тăма пĕлмеççĕ
Кăпăшка сар чĕпĕсем.
Пурте пур-и-ха вĕсем?

Тен, юри пăтраштараççĕ,
Петюкран чупса тараççĕ.

Кăвакал ятлать: «Нарт-нарт!
Тĕрĕс шутласа кăтарт!»





# Курак тăманĕ.

Кунĕсем хĕвеллĕ, уçă.
Çил касать, çиет юра.
Сукмакпа утса пыруçăн
Лăкăшт! çеç путать ура.

Çĕтĕк çитĕ витнĕ евĕр
Курăнса выртать уй-хир.
Вăранман-ха çĕр аннемĕр,
Сирĕлмен-ха ун ыйхи.

Йăвине курак майланă,
Шăнкăрч йышăннă вĕлле.
Пурпĕр сивĕ. Çил вăйланнă.
Парăнасшăн мар хĕлле.

Кĕç тавралăх капăрланĕ.
Хальлĕхе чăрмавĕ пур:
Çумалла курак тăманĕ,
Витмелле çĕре çĕн юр.





Çут çанталăкăн, тăванăм,
Тĕлĕнтермĕшĕ пурах.
Çăвиччен курак тăманĕ
Йăвине лармасть курак.

Килетех курак тăманĕ
Кĕттерсессĕн те вăрах.
Хĕлĕн хыпăнчăк тăванĕ —
Çил шавла пуçлать вара.

Куç курми ун чух вĕçтерĕ!
Ӳркенмесĕр тухса кур.
Хыççăнах йалт ирĕлтерĕ.
Çĕнĕ юр та — çĕрĕк юр.

Çакăн хыççăн вăйсăрланĕ
Хĕлĕн ашкăнчăк алли.
Тин лăпланĕ вăл, ăсанĕ
Вăй пухма кайран валли.

# Çурхи хăна.

— Сар хĕвелĕм, çут шевле
Пĕчĕк чуншăн
ан шелле, —
Такампа пуплет Арçук,
Балконра
никам та çук. —

Çĕр юртан та тасалман,
Кун нумай та тăсăлман.
Йăвине курак ларман,
Чĕппине те кăларман.

Кур: эп хам та кĕрĕкпе,
Халь те ăшă çĕлĕкпе.
Çуркунне çитмен халех,
Эс васкатăн ахалех.

Иртерех-ха вăранма,
Йывăр килĕ пурăнма.
Хĕлĕпе çимен, ĕçмен,
Ав вăю та çук вĕçме. —

Кампала пуплет Арçук?
Курмасан чухлас та çук:
Балконра сĕрлет шăна —
Малтанхи çурхи хăна.





# Çумăр пĕлĕчĕсем.

Те кĕтнĕ, те кĕтмен — çапах та килчĕç,
Те чĕннĕ, те чĕнмен — çапах та кĕчĕç
Шупашкара та. Вăрманта та пулнă,
Хăш-пĕрисем ялта, уйра, тен, юлнă...

Пĕлместĕп, мĕнпеле-ши хăналанчĕç?
Пĕр вăхăт хăйсем тĕллĕн хуçаланчĕç:
Ташларĕç, сикрĕç, савăнса юрларĕç,
Шалт ывăнсан та çĕр касма юлмарĕç.

Тавралăх уçă. Савăнăç пирте те:
Ăш çумăр хыççăн пурте хĕпĕртетпĕр.
Пĕр çăмăл пĕлĕт тайкаланчĕ, куçрĕ,
Хĕвел пике вăтаннăн куçне уçрĕ.

И-48419
Национальная библиотека
Чувашской Республики

# Пĕлĕтсем.

Аякра-аякра пĕлĕтсем сапаланчăк,
Варринче çеç тӳпе янкăр тăрă, таса.
Таçта çĕтнĕ паян Çил ачи — хыпаланчăк,
Пĕлĕт кĕтĕвĕ юлнă кĕтӳçсĕр тăрса.

Ашкăнса хайхисем хăруш вăйă пуçланă.
Куç умне вăрçă хирĕ тухать сăнасан:
Пиçсе çитнĕ тырра тĕтĕм-сĕрĕм хупланă,
Шур хула вырăнне — чул купи те тусан.

Аякра-аякра пĕлĕтсем сапаланчăк,
Хиросима кăмпи пек çĕкленнĕ пĕри.
Тăвăл урнă пекех, хумлă тинĕс пăлханчăк,
Карапа та персе вут тивертнĕ юри.





Асӑрхан лайӑхрах тинкерсе сӑнасассӑн:
Улӑх тӑрӑх шӑвать темиҫе тимӗр танк.
Ыйтнӑнах туйӑнать пулӑшу вӑйсӑр сасӑ,
Курӑнать аманса сусӑрланнӑ салтак.

Аякра-аякра пӗлӗтсем сапаланчӑк...
Ҫӗр ҫинче вӑрҫӑ вучӗ сӳнмен тӗппипе.
«Миршӗн — мир!» —
кӑшкӑрать ҫӳле йӑтнӑ хӑмачӑ,
Ҫырӑнать вӑл паян темиҫе чӗлхепе.

Ирӗкре ман ҫӗршыв: ял-хули те, тӳпи те
Юн тӑкан ҫумӑртан, тӗтӗмрен, ҫулӑмран.
Канӑҫ ҫук пурпӗрех ҫӗр ҫинче
пур ҫӗрте те
Хальлӗхе ирӗк, танлӑх, тӑванлӑх ҫукран.

## Кĕрхи хурăн.

— Ай, якăлти кĕрхи хурăнăм,
Çӳхе кăна шупăр тăхăннă,
Сар йăпăрка тутру салтăннă,
Хĕл кунĕнче епле пурăнăн?

— Юр пике тупраллă пулĕ-ха:
Шур тăлапа ура сырăп-ха,
Шур çӳçеллĕ тутăр çыхăп-ха —
Хĕл çитсен унта куç курĕ-ха.

## Тирек.

Кĕрхи хĕвел пĕçертрĕ эрнипе,
Тирек тарларĕ сарă тумĕпе,
Вара хывса пăрахрĕ пĕтĕмпе.
Кĕрес-ши, кĕрес мар-ши тенĕ пек
Тăрать шыв хĕрринче халь кунĕпе.





# Хӗл Мучи мӗнпе килет?

Ҫил ачийӗ чуптăр-чуптăр-чуптăр,
Хӗл Мучи килнӗ шыратăр, туптăр.
Кантăкран шаккатăр хытăрах,
Ыйхăран вăраттăр хăвăртрах.

Шурă пӗлӗт куҫтăр-куҫтăр-куҫтăр,
Инҫетри ҫут ҫăлтăр куҫне уҫтăр,
Уява курса чӳречерен
Хаваслантăр вăл та чӗререн.

Шурă юрӗ ҫутăр-ҫутăр-ҫутăр.
Мăшăр йӗлтӗр шутăр-шутăр-шутăр.
Туйипе юра тӗрле-тӗрле
Хӗл Мучи килет пуль йӗлтӗрпе.



# Нарăс.

Вылянчăк кăмăллă вăл нарăс:
Хаяр та, ырă та пĕр харăс.
Пите тăм илтерет сивви,
Куçа шартатать хĕвел шевли.

Çĕрле те çывăрмасть вăл нарăс:
Лартса тухать тем чухлĕ парăс
Çулсем çине унта, кунта...
Ирпе сукмак та çук утма.

Ёнер улатчĕ çил мăн саслăн,
Паян мĕнпур тĕнче хаваслă.
Таçта çити шап-шур инçет,
Пин çăлтăр юр çинче çиçет.

Кăшт сивĕрех пулсан та, нарăс,
Пăхса ытармалла та мар эс.
Эп пĕчĕк мар вĕт хăрама,
Тухса вĕçем-ха урама.



# Çăлтăрсем.

Утап васкамасăр каçхи урампа,
Сукмак сас парать кăчăрт-кăчăрт!
Тен, хăйĕн çине пуснăран урапа
Шур юр васкатать:
«Ут, — тет, — хăвăрт!»

Манпа сăмахланăн йăл-йăл тӳпери
Инçе çăлтăрсем куç хĕсеççĕ:
— Кунта ялкăшать сан валли те пĕри…
— Вăл хăшĕ?
— Шыра та туп, — теççĕ.

Тăхта-ха, ура айĕнче те вара
Хайхи çăлтăрсем пулчĕç мар-и?
Çавсем-çке, çавсем илĕртеççĕ, ара,
Пиртен те суйла теççĕ мар-и…





Ăçта пăх — куратăн унта çăлтăрсем:
Çĕр çиййĕ, тӳпе йăлтăр-йăлтăр.
— Ăçтан-ха эсир, çĕр çинчи çăлтăрсем,
Мĕскершĕн ӳпне Алтăр Çăлтăр?

— Пире Юр пике Хĕл Мучи витринчен
Çав алтăрпала ăсса илчĕ,
Вара ӳпĕнтерчĕ... Пин çăлтăр ирччен
Кунта, Çĕр çине, вĕçсе килчĕ.



# Тарçăсăр патша.

Çӳллĕ ӳснĕ хырлăхра
Йăлт та ялт сикет пакша.
Вăрманти çак ырлăхра
Хăй хуçа вăл, хăй — патша.

Чаплă-чаплă кĕрĕкпе,
Кĕрĕк тĕслĕ çĕлĕкпе
Сивĕ мар ăна хĕлле,
Пурăнать яланхилле.

Мĕн çисе пăхас килет —
Керменне кĕрсе илет.
Ун миçе ампар-кĕлет —
Кам шутланă, кам пĕлет.

Пĕринче упрать йĕкел,
Тепринче выртать кĕтмел.
Çывăхрах ав ярăмпа
Çакăнса тăрать кăмпа.

Мăйăр тăкăннă — курать,
Хăвăла илсе хурать.
Кунĕпех ĕçлет пакша —
Тарçă-тĕрçĕсĕр патша.



# Тилĕпе Улатакка.

*Сăвăлла юмах*

Сăвă кăмăллатăр тăк,
Халапа хаклатăр тăк
Ан чупсамăр тăпăртăк,
Итлесемĕр шăпăртăк.

Пĕр сунарçă вăрманта
Вăрттăн-вăрттăн вырăнта
Шăтăк тунă — пусă мар,
Пурлăх пытарма та мар.

Вăхăт-вăхăт юртăпа,
Вăхăт-вăхăт утăпа
Пынă май сасартăках
Тилĕ ӳкнĕ шăтăка.

Йывăça такка-такка
Тем ĕçлет Улатакка.
Курчĕ: Тилĕ кускалать,
Çӳлелле хăй пăхкалать.

— Тилĕ тусăм, тух кунта,
Мĕн çухатнă эс унта? —
Тет хайхи Улатакка —
Тавçăрулăх çук та-ха.

Пысăк ĕç тытсан пĕри
Пулăшма пырать тепри.
Ку вăл — пурăнăç йĕрки,
Паянхи те ĕмĕрхи.





Тилĕ тус çакна пĕлет,
Пĕлнĕрен чееленет.
Ĕçлĕ евĕр уткалать,
Кайӑка çапла калать:

— Пусӑ чаврӑм —
çук пура,
Çав кулянтарать, ара.
Ĕç нумай, пĕлетĕн-и,
Нимене килетĕн-и?

— Пулӑшас, ара, пырас,
Тулĕк мĕн туса парас?
Ху пĕлен, эп паттӑр мар.
— Пулӑш йывӑç антарма.

Таккаса вӑр-вартарах
Пĕрене çӳлтен пӑрах.
Пурине ярап хамах,
Тӑррине витеп хӑма.

— Тен, мана та пулăшăн?..
Ним шеллемĕп пусăшăн.
— Пĕтерер-ха манăнне,
Хыççăн чавăп санăнне.

Килĕшет Улатакка.
Сăмсипе такка-такка
Туратсем касса ярать,
Шăтăка персе парать.

Туратсем тăксан-тăксан
Тилĕ тухрĕ шăтăкран.
Кайăкĕ чĕнет: — Атя
Халь каятпăр ман пата.

Тепĕр пусă чавмалла,
Пурине антармалла...
— Ăшăм хыпрĕ, —
тет Тилли, —
Çук-и санăн ĕçмелли?

— Юрĕ, —
тет Улатакка, —
Чуп атя, хыçран танкка.
Çăлшăн тем тума хавас,
Ĕçтерем сана кăвас.

...Тикĕт сĕрнĕ урапа
Тикĕссĕн кусать çулпа.
Çивăхри ялта пасар,
Çавăнтаваскать Макар.



Шăмпăр-р! шăмпăр-р!
тет пичке.
Мĕн сутма каять пичче?
Ан васка, хăвах куран,
Вар хытичченех кулан.

Шăмпăртатнă май пичке
Шăхăрса юрлать пичче.
Тилхепе — тăпачă мар,
Тусанпа тулмасть çăвар.

Тар тăкма ун тарçă пур,
Мул пухмашкăн майĕ пур.
Ма Макарăн шуйханас?
Унăн пурнăçĕ канас.

Пичкене такка-такка
Шăтарать Улатакка.
Пĕрхĕнсе тухать кăвас,
Тилĕ çав тери хавас.



Усламçа сасартăках
Тапăнать Улатакка.
Так! тутарчĕ пуçĕнчен,
Вут кăларчĕ куçĕнчен.

Вĕçсе ӳкрĕ ун шлепки,
Еплерех сурать лĕпки!
Кăтăрса Макар пичче
Сикрĕ урапи çинчен.

Тилĕ тус кăвас ĕçет,
Кайăк малалла вĕçет.
Хăвалать ăна Макар —
Тыттарма леш ăссăр мар:

Сусăр евĕр хăтланать,
Кăшт вĕçет те хутланать.
Лавĕнчен аяккарах
Уттарасшăн Макара.

Лăпăс-лăпăс чуптарать,
Хăй каллех вĕçсе тарать.
Ярса тыт часрах,
Макар,
Хăвăнтан кулма ан пар.

...Йăр-р та йăр-р
юхать кăвас,
Тăкăнсан та — мĕн тăвас?
Тиллĕн тăхăр хырăм мар,
Веç ĕçме вăл тĕве мар.



Пасар çулĕ вăрăм мар,
Мыскарасăрах та мар.
Тăнкăр-р! тăнкăр-р! тет пичке,
Пушăллах каять пичче.

— Ĕçрĕн-и, тăрантăн-и,
Çăл чавма пыратăн-и? —
Тет Улатакка Тилле, —
Çул тытар-и ман киле?

— Чим-ха, ан хыпалантар,
Хырăм хытиччен култар.
Хыççăн кăмăллă сăнпа
Пусă чавăпăр санпа.

Килĕшет Улатакка —
Ăсĕ сăмсара та-ха...
— Юрĕ, — тет вăл. — Култарам.
Саншăн пултăр ку тарам.



Çук, каймарĕç аякка
Тилĕпе Улатакка.
Авăн çапнă тĕлелле
Ертсе кайрĕ вăл Тилле.

Леш Макарăн ку йĕтем.
Шутсăр хытă çав этем.
Тарçине каçпа-ирпе
Çитерет вăл шĕв шӳрпе.

Ывăлне те янă халь
Ларасран тарçи ахаль.
Пус хушасшăн
пус çумне
Кăларать вăл çын чунне.

Иккĕн тан тăпачăпа
Кĕвĕллĕн çапа-çапа
Тĕшĕлеççĕ ав кĕлте,
Тырă кирлĕ çав килте.

Çамрăк çын
кĕçех тарлать,
Çаннипе питне шăлать.
Хайхине Улатакка
Пуç тăрнех
ларса таккать.

— Ай! Ытла та
сĕмсĕрскер!
Мĕн тăратăн, Микихвер?



Çап ăна тăпачăпа! —
Вăрçăнать леш тарçăпа.

Итлемешкĕн хуçине
Хăнăхтарнă тарçине.
Сулчĕ пачĕ лайăхах —
Тытаймарĕ кайăка.

Лекнĕрен тăпач пуçа
Тӳп! туса ӳкет хуçа.
Микихвершĕн — макăра,
Мĕн калас ун Макара?..

Тилĕ тытнă та варне
Хупаймасăр çăварне
Каçăхса кайса кулать.
Микихвер вара... улать.

— Çитĕ, тусăм, каймалла,
Пирĕн пусă чавмалла, —
Тет Тилле Улатакка —
Унăн шанăç пур та-ха.



Хуравлать Тилли: — Ара,
Кĕç пырап. Унччен вара
Тепĕр мыскара кăтарт,
Хальхинче мана хăрат.

Тарăхсассăн та самай
Кайăк хуравлать: — Алай.
Укăлча патне каяр,
Хуралçи унта хаяр.

...Çунатли çӳлте вĕçет,
Çĕр питне куçпа виçет.
Çуранни çулпа пырать,
Çăкăр мар, нуша шырать.

Çитрĕç акă ял хĕрне,
Куç хĕсеççĕ пĕр-пĕрне.
Пурăнать кунта Куçак,
Тепĕр ячĕ ун — Уçак.

Япăх мар çынни, йăваш,
Тулĕк темшĕн алапаш.
Мĕн уçать — ăна хупмасть,
Мĕн илет — калле хумасть.

Шырамасть çĕтернине,
Çĕклемест ӳкернине.
Çĕнеймест ӳркевлĕхе,
Тытаймасть йĕркелĕхе.

Кайрĕ мунчана Куçак,
Юлчĕ калинкке уçах.



Çавӑ кирлӗ те Тилле,
Вӑл кӗресшӗн çак киле.

— Лар ав калинкке умне,
Сӗкӗнмешкӗн алкумне
Хапӑл тунӑ хӑна мар,
Кӑшт сӑпайлӑрах пулар, —

Шӑппӑн кайӑк ӑс парать,
Хӑй хапха тӑрне ларать,
Шак! шаккать вӑл алӑка,
Янратать тавралӑха.

Йытӑ сисрӗ пулмалла,
Сӑнӑ евӗр тулалла
Сикрӗ тухрӗ хӑр-р! та хар-р!
Тилӗ, тӗлӗрсе ан лар!



Сад пахчийӗ витӗрех
Сирпӗнсе тухса тӳрех
Тилӗ вӗҫрӗ хирелле —
Вӑрмана ун ҫитмелле.

Илтӗнет хыҫра хӑр-хар-р!
Кӗҫ ҫураҫҫӗ-и лӑр-лар?..
Эй, хура вӑрман, хӑтар,
Йыт кулли пулма ан пар!

Ак вӑрман...
Лаштра юман...
Тиллӗн вӑйӗ те юлман.
Сикрӗ кӗчӗ хӑвӑла.
Хаљ... хӑть ҫиччӗн хӑвала.

Хӳтлӗхре ларать чӗр чун,
Пӗлесси килет-ҫке ун:
— Урасем, хӑрарӑр-и,
Ҫӑлӑнмаваскарӑр-и?

— Каялла пӑхмарӑмӑр,
Малаллах чавтартӑмӑр.
Тартӑмӑр мӗнпур вӑйран,
Хӑтӑлтӑмӑр йытӑран.

— Сылтӑм, сулахай хӑлха,
Мӗн шутларӑр, калӑр-ха?
— Лӑпчӑнтӑмӑр,
выртрӑмӑр,
Курӑнмасӑр пытӑмӑр.



— Эс, хӳрем, кала тӳрех,
Хам куратӑп витӗрех:
Пулӑшас тесе тарма
Витӗнмерӗн вӗт тарпа?

— Халь ярса тытаҫҫӗ-и,
Халь туртса ҫураҫҫӗ-и,
Пӗтрӗм терӗм, хыпӑнтӑм,
Ним тумасӑр ывӑнтӑм.

— Эс ҫапла-и, чеескер,
Выҫӑ йытӑ ҫиесскер?!
Тытиччен сана тарам
Паянах йытта парам! —

Тет те тилӗ хӳрине
Ывӑтать тулаш енне.
Пысӑк йытӑ кап! кӑна
Ячӗ тытрӗ тет ӑна...

Тарнӑ тилӗ таврӑнса
Тарӑн пусӑ тӑвасса
Кайӑк халӗ те кӗтет.
Ҫакӑнпа юмах пӗтет.



# Тупмалли

## Сăвăсем

Ирхине 4
Кусене паян лекет 6
Сĕт ачисем 9
Ма кулаççĕ? 10
Хăратмăш 11
Кăвакалăн миçе чĕпĕ? 12
Курак тăманĕ 14
Çурхи хăна 16
Çумăр пĕлĕчĕсем 17
Пĕлĕтсем 18
Кĕрхи хурăн 20
Тирек 20
Хĕл Мучи мĕнпе килет? 22
Нарăс 23
Çăлтăрсем 24
Тарçăсăр патша 26

## Сăвăлла юмах

Тилĕпе Улатакка 28

45.00



Литературно-художественное издание

*Для детей младшего школьного возраста*

**Матвеева (Антонова) Галина Алексеевна**

# КУРАК ТĂМАНĔ
# ГРАЧИНАЯ МЕТЕЛЬ

Стихи. Сказка в стихах

*На чувашском языке*

Редактор *О.М. Иванова*
Художник *И.В. Алексеев*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Е.Е. Фомина*
Корректоры *Е.П. Казакова, Н.Г. Герасимова*
Компьютерная верстка *М.В. Филипповой*

6+ Информаци продукцийĕн палли (436 № ФЗ. 29.12.2010).
Знак информационной продукции
согласно ФЗ от 29.12.2010 г. № 436-ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 10.02.16. Формат 70×100 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 3,23. Уч.-изд. л. 2,55. Тираж 1000 экз. Заказ № 54. Изд. № 16.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство» Мининформполитики Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел. / факс (8352) 28-85-51.

Отпечатано в ООО «ВОЛГА-ПРИНТ», 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15.

ISBN 978-5-7670-2452-0